26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 ИЮЛЬ 21 ЮНКУН 148(6385) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН тата ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮЛӖН 19-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июлӗн 19-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем фронтӑн ОРЕЛ участокӗнче наступлени вӑйлатса пырса 6—10 километр малалла куҫнӑ. Пӗр кун хушшинче нимӗҫ войскисен 12 контратакине, вӗсене пысӑк сухатусем тӳстерсе, сирсе пӑрахнӑ.

ОРЕЛТАН ҪУРҪӖРТЕРЕХРЕ наступлени туса пыракан пирӗн войскӑсем (малтан пӗлтернисемсӗр пуҫне) халӑх пурӑнакан татах 70 пункта йышӑнса илнӗ, вӑл шутра: БУДА, УСАДЬБА, ХАТЬКОВО СУСЕЯ, БРУСНЫ, УКОЛИЦЫ, КИРЕЙКОВО, НОГАЯ, ДОЛИНА, ВЫТЕБЕТЬ, СЕРЕЛИЧИ, АЛЕШНЯ, ЩЕРБОВО, КУДРЯВЕЦ, ПЕШКОВА, МЕДВЕДКИ, ПЕЛЕВКА, МИЛЯТИНО, ЛЬГОВО, ИЛЬИНСКОЕ, ВЕРХНЯЯ РЫДАНЬ, КОПТЕВО, ДОЛБИЛОВО, РУДНЕВО, АЗАРОВО, ГОРОДИЩЕ ятлӑ халӑх пурӑнакан пункчӗсем.

ОРЕЛТАН ХӖВЕЛТУХӐҪНЕРЕХРЕ пирӗн войскӑсем (малтан пӗлтернисемсӗр пуҫне) халӑх пурӑнакан 40 пункта йышӑнса илнӗ, вӑл шутра: СОЙМОНОВО, БОГДАНОВО, ОДИНОК, СЫЧИ, ЗАБРОДЫ, ДАЛЬНОВИДОВО ятлӑ халӑх пурӑнакан пункчӗсем.

ОРЕЛТАН КАНТАРТАРАХРА пирӗн войскӑсем халӑх пурӑнакан 20 пункта йышӑнса илнӗ, вӑл шутра: ОЗЕРКИ, ТУРЕЙКА, ТРОСНО, ЛАВРОВО ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсем тата МАЛОАРХАНГЕЛЬСК ятлӑ станци.

БЕЛГОРОД ЕНЧЕ — разведчиксем вӑйлӑн шыраса ҫӳренӗ.

Июлӗн 18-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем фронтӑн Орел участокӗнче нимӗҫсен 72 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллерирен персе тӑшманӑн 97 самолетне ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Фронтӑн Орел участокӗнче пирӗн войскӑсем малалла наступлени туса пынӑ. Нимӗҫсем васкасах ҫӗнӗ вӑйсем илсе килеҫҫӗ те вӗсене контратакӑна кӗрте-кӗрте яраҫҫӗ. Тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса тата унӑн нумай йышлӑ контратакисене сире-сире пӑрахса, пирӗн чаҫсем малалла куҫса пынӑ тата халӑх пурӑнакан чылай пунктсене йышӑнса илнӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем юлашки икӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче, нимӗҫсене пыра-пыра ҫапса тата вӗсен контратакисене сире-сире пӑрахса, нимӗҫсен 150 ытла танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, хӑй тӗллӗн куҫса ҫӳрекен 54 тупӑне тата нумай орудие пӗтерсе тӑкнӑ. Йышлӑ трофейӑсем тытса илнӗ, вӑл шутра хӑй тӗллӗн куҫса ҫӳрекен 31 орудие тата боеприпассем тиенӗ 17 вагон. Тепӗр участокра Логозин юлташ командир пулса ертсе пыракан часть темиҫе ҫӗр гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ, 215 нимӗҫ салтакне тыткӑна илнӗ тата 12 полевой орудие, танксене хирӗҫ перекен 2 орудие, 43 пулемет, боеприпассен складне, медикаментсен складне тытса илнӗ. Лейтенант Маценко командир пулса ертсе пыракан танковӑй рота тӑшманпа хире-хирӗҫ ҫапӑҫса нимӗҫ мотопехотин батальонне пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Белгород енче нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче пирӗн сапернӑй войскӑсем хӑйсене уйрӑмах палӑртнӑ. Нимӗҫсем наступлени тума пуҫланӑранпа, урӑхла каласан, июлӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа, минӑсем лартнӑ вырӑнсем ҫинче, ҫавӑн пекех тата минер-окопниксен куҫса ҫӳрекен групписем нимӗҫсен ҫӗршер танкӗсене, бронемашинисене тата боеприпассемпе войскӑсем турттарса пыракан 200 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Столяров юлташ командир пулса ертсе пыракан саперсем нимӗҫсен 28 танкне, пирӗн чаҫсем вырнаҫса тӑнӑ ҫӗре кӗрсе кайнӑскерсене, ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Гварди майорӗ Аруагамов юлташ командир пулса тӑракан минер-окопниксен подразделенийӗ тӑшманӑн 11 танкне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Новороссийскран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман, пирӗн чаҫсем йышӑнса илнӗ высотана каялла тавӑрма хӑтланса, темиҫе хутчен хаяр контратакӑсем тунӑ. Нимӗҫсен пур контратакисене те, вӗсене пысӑк ҫухатусем тӳстерсе, сире-сире пӑрахнӑ. Пӗррехинче нимӗҫсен 560-мӗш штрафной батальонӗ, унтер-офицерсен 3 ротинчен, офицерсен пӗр ротинчен тӑраканскер, контратака тунӑ. Батулка юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем пулеметсенчен персе тата алӑ вӗҫҫӗн тӑрса ҫапӑҫса, ҫав батальон составӗнчен 300 ҫити гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Калинин фронтӗн пӗр участокӗнче пирӗн разведка тӑвакан 3 отряд, тӑшман позицийӗсем ҫине артиллерирен пенӗ хыҫҫӑн, нимӗҫсене атакӑланӑ. Разведчиксем нимӗҫсене вӗсем йышӑнса тӑракан позицисенчен хӗссе кӑларнӑ тата, тӑшманӑн тӗрекленӗ пунктне йышӑнса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫура разведка тӑвакан отрядсем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнисем пур.

* * *

Ленинград фронтӗнче артиллерипе минометсенчен персе тӑшманӑн 4 орудине пӗтерсе тӑкнӑ тата 20 ытла дзотне ишӗлтернӗ. Пӗр чаҫри снайперсем 73 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллерирен персе Ленинград патне пымалли вырӑнсенче нимӗҫсен 3 самолетне ӳкернӗ.

* * *

Партизансен «За Родину» ятлӑ отрячӗ, Орел облаҫӗн районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, нимӗҫсен пӗр пысӑк ялта вырнаҫса тӑракан гарнизонне кӗтмен ҫӗртен пырса тапӑннӑ. Партизансем яла штурмласа йышӑнса илнӗ те гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата темиҫе пулемет, автоматсем, винтовкӑсем, боеприпассемпе ытти трофейӑсем тытса илнӗ. Партизансен Смоленск облаҫӗнче кӗрешекен отрячӗ июлӗн 9-мӗшӗнче нимӗҫсен горючи турттарса пыракан эшелонне сирпӗнтерсе янӑ. Взрыв пулнипе состав ҫунма тытӑннӑ. 700 тонна бензин пӗтнӗ. Смоленск партизанӗсен тепӗр отрячӗ шоссе ҫулӗ ҫинче нимӗҫ салтакӗсем ларса пыракан тата ҫар грузӗсем турттарса пыракан 18 автомашинӑна сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Нимӗҫсен 183-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 351-мӗш полкӑн 9-мӗш ротинчен фронтӑн Орел участокӗнче тыткӑна илнӗ ефрейтор Герберт Зейстер ҫапла каласа панӑ: «351-мӗш полк юлашки вӑхӑтченех Спас-Деменск районӗнче канура тӑнӑ. Офицерсем пире дивизи часах Францие каять, унтан вара Сицилие каять, тесе пӗлтерчӗҫ. Пачах та кӗтмен ҫӗртен, июлӗн 15-мӗшӗнче полка тревогӑпа ура ҫине тӑратрӗҫ те пирӗн оборонӑна вырӑс войскисем татса кӗнӗ района куҫарса кайрӗҫ. Пире пӗр чарӑнмасӑр, канма памасӑр хӑваласа килчӗҫ. Ҫапӑҫу пыракан района ҫитсен, полкӑн подразделенийӗсене вырӑссен наступлени тӑвакан подразделенийӗсене хирӗҫ тӳрех контратакӑна кӗртсе ячӗҫ. Пӗр сехет хушшинче 9-мӗш ротӑран 56 салтак вилсе, 15 салтак аманса пӗтрӗҫ, ыттисем вара ҫапӑҫу хирӗнчен тарчӗҫ».

Герберт Зейстер пӗлтерни ҫумне ҫав 351-мӗш полкӑн 12-мӗш пулеметнӑй ротинчи обер-ефрейтор Вилли Питтер хушса каласа панӑ. Вӑл ҫапла пӗлтернӗ: «Пирӗн дивизие сывӑх кунсенче Францие, унтан вара—Сицилие яраҫҫӗ тесе, эпир ҫирӗп шанса тӑнӑ. Анчах Орел районӗнче пулса тӑнӑ йывӑр лару-тӑру пирки, пире ҫавтери васкавлӑн кунта куҫарса килчӗҫ. Тул ҫутӑлас умӗн 3-мӗш батальонӑн салтакӗсене контратакӑна хӑваласа кӗртрӗҫ. Командовани пирӗн умма вырӑссен наступленине чарса хума задача лартрӗ, анчах ҫакӑнтан нимӗн те тухмарӗ. Батальон вырӑс пехотипе танкӗсен вӑйлӑ вут-ҫулӑмӗ айне лекрӗ те пысӑк ҫухатусем тӳссе каялла чакрӗ».

Андреева трактористка ҫулталӑкри плана пурнӑҫланӑ

ВКП(б) Чӑваш Обкомне Чарыков юлташ ячӗпе Чкаловски МТС-ӗнчи 7-мӗш бригадӑн трактористки Андреева юлташ телеграмма янӑ. Вӑл хӑйӗн телеграммипе трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне, хӑйӗн сменипе, июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне ирттерсе тултарни ҫинчен пӗлтерет. СХТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе Андреева юлташ 215 гектар сухаланӑ, 195 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ. Тырпулсене пухса кӗртнӗ ҫӗрте Андреева юлташ комбайнер пулса ӗҫлеме тытӑнать. Вӑл хӑйӗн комбайнне, июнӗн 27-мӗшӗ тӗлнех уя тухма хатӗрлесе ситернӗ.

ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ Андреева трактористкӑпа ҫакӑн пек ответлӑ телеграмма панӑ:

«ВКП(б) Обкомӗ Сире трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне 136 процент пурнӑҫа кӗртнӗ, горючи чылай перекетлесе хӑварнӑ тата хӑвӑра ҫирӗплетсе панӑ комбайна юсаса ситернӗ ятпа саламлать.

Комбайнпа тырпул кӗске срокӗсенче тата пӗр ҫухатусӑр пухса кӗртмелли плана пурнӑҫлассишӗн Эсир хӑвӑрӑн мӗнпур пӗлӗвӗрпе вӑй-халӑра хурса ӗҫлессине шанса тӑратпӑр.

ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ

И. ЧАРЫКОВ».

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнче

1943 ҫулта тырпулсене пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен

(Малалли. Пуҫламӑшӗ ӗнерхи номерте)

II.

Тӗштырӑсене тата ҫу тумалли культурӑсене пухса кӗртес енӗпе

6. ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ советпа парти вырӑнти органӗсене тата ҫӗрӗҫ органӗсене, МТС-семпе колхозсене тата совхозсене тырпулсем тӑккаланнипе кӗрешесси ҫав тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен асӑрхаттарассӗ; тырпулсем тӑккаланнипе кӗрешес тӗлӗшпе облисполкомсене, крайисполкомсене, республикӑсен Совнаркомӗсене, парти обкомӗсемпе крайкомӗсене, союзлӑ республикӑсенчи компартисен Центральный Комитечӗсене, райисполкомсене, парти райкомӗсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене тата колхозсене ҫапла тума хушас:

а) тырпулсене ытлашши пулса каймалла тата ларнӑ ҫӗртех тӑкӑнма памалла мар. Час тӑкӑнакан сортсемпе культурӑсене—ырашпа, ҫурхи тулла, пӑрине, вире, пӑрҫана, викӑна, горчицӑна тата ыттисене те чи кӗске срокра пухса кӗртесси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫавӑрса пӑхмалла;

б) кашни колхозпа совхозра тата МТС-ра комбайнсем ҫумне тата тырӑ вырмалли ҫӑмӑл машинӑсем ҫумне зерноуловительсем лартмалла. Комбайнсемпе тырпула ҫӳлтен касса вырмалла мар. Кӗске пулнӑ тата выртса пулнӑ тырпула вырса пуҫтарма комбайнсене аялтан вырса пымалли хатӗрсем лартса вӑхӑтра туса йӗркелемелле. Комбайнсемпе молотилкӑсене вӗсемпе тырӑ вырса пуҫтарнӑ чухне тата авӑн ҫапнӑ чухне тырпул тӑккаланассине чакармалла туса йӗркелес тӗлӗшпе комбайнерсемпе машинистсене тӗплӗ инструкци памалла. Молотилкӑсем мӗн чухлӗ таса ҫапнине тата комбайнсем мӗн чухлӗ таса вырнине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла;

в) тырӑ вырса илнӗ хыҫҫӑн пучахсене тӗплӗн пухассипе ҫийӗнчех йӗркелемелле. Молотилкӑсемпе капансем патне кӗлте турттарнӑ чухне, комбайнсем патӗнчен итем ҫине тата итемсем ҫинчен государствӑн, колхозӑн амбарӗсем патне турттарнӑ чухне тырпул тӑккаланнине пӗтермелле, ҫав шутпа тырӑ турттармалли ещӗксене, автомашинӑсене, михӗсемпе шӑналӑксене, брезентсене вӑхӑтра хатӗрлесе хумалла; тырпула юсавлӑ мар ӑпалапа турттарма чармалла. Ҫакӑн пек йӗрке тумалла: тырӑ вырса пуҫтарнӑ кашни участока пилӗк кун хушшинче уйхир бригадисенчен колхоз председателӗсен йышӑнмалла, тырпула комбайнсемпе вырса пуҫтарнӑ чухне — колхоз председателӗпе МТС директорӗн йышӑнмалла.

7. Совхоз директорӗсемпе колхоз председателӗсен ҫакӑн ҫине ҫавӑрӑнса пӑхмалла: чылай тырпул авӑн ҫапнӑ хыҫҫӑн итемсем ҫинче тата уйхирте выртнӑ чухне пӑсӑлса пӗтет, ҫавӑн пирки, тӗштырра пӑсӑлма парас мар тесе, комбайнсемпе вырса пуҫтарнӑ хыҫҫӑн тата авӑн ҫапнӑ хыҫҫӑн тӗштырра итемсем ҫинче вунӑ кунран ытла выртарма чарас.

8. Тырпула вырнӑчен, ҫавӑн пекех вырнӑ тырпула, ҫӗмелсемпе капансене хывнӑ тырпула сыхласа усрама кашни бригадӑрах кӑнтӑрлахи тата ҫӗрлехи хуралсем уйӑрмалла, кунсӑр пуҫне, тырӑсем пулса ҫитиччен 10—15 кун малтан тырпулсене пӑхса ҫӳрекенсене уйӑрмалла, вӗсем тӳрремӗнех колхоз председательне пӑхӑнса тӑма тивӗҫлӗ.

9. Совхоз директорӗсен тата колхоз правленийӗсен молотилкӑсемпе комбайнсем ҫапнӑ тырра обязательнӑй йӗркепе виҫессине, тырпула итемсем ҫинче вырнӑ чухне, ӑна итемсем ҫинчен хатӗрлев пункчӗсене е колхоз амбарӗсене турттарнӑ чухне тӗплӗн сыхлассине йӗркелемелле.

Тырпулсене итемсем ҫинче сыхласа усрама талӑкӗпех хуралсем тӑратмалла. Райисполком председателӗсене, парти райкомӗсен секретарӗсене тырпулсене уйхирте, итемсем ҫинче, авӑн ҫапнӑ чухне тата турттарнӑ чухне мӗн чухлӗ сыхӑ усранине контрольлесе тӑма хушас. Тырӑ виҫекенсем, кладовщиксем, хуралҫӑсем, тырпула уйхирте пӑхса ҫӳрекенсем тата тырӑ турттарнӑ чухне аслӑ лавҫӑсем пулса ӗҫлеме чи лайӑх колхозниксене суйласа илмелле.

10. Тырпулсене пухса кӗртнӗ ҫӗрте тата ялхуҫалӑх продукчӗсем турттарнӑ ҫӗрте ӗҫлекен колхозниксене хавхалантарас шутпа тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра тата хатӗрлев планӗсене пултарнӑччен колхозниксене аванс шучӗпе тата хуҫалӑхри нушасем валли тӗштырӑ, хӗвелҫаврӑнӑш, ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫсем ҫав культурӑсене государствӑн хатӗрлев пункчӗсене панӑ хисепрен ҫакӑн чухлӗ уйӑрса памалла тӑвас: тӗштырӑсем—15 процент, рис—10 процент, хӗвелҫаврӑнӑш — 5 процент, ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем — 15 процент.

Уйӑрнӑ тӗштырӑран, рисран, хӗвелҫаврӑнӑшӗнчен, ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсенчен ҫурри колхозниксене вӗсем уборка вӑхӑтӗнче тырӑ вырнӑ ҫӗрте тата ытти уйхир ӗҫӗсенче, ҫавӑн пекех тата ялхуҫалӑх продукчӗсем турттарнӑ ҫӗрте ӗҫлесе илнӗ ӗҫкунӗсем ҫине валеҫсе памалла.

Уйӑрнӑ тырӑран тепӗр ҫур пайне мӗнпур колхозниксене ҫулталӑк пуҫламӗшӗнчен тытӑнса пур тӗрлӗ ӗҫсенче те, вӑл шутрах уборка ӗҫӗсенче те ӗҫлесе илнӗ ӗҫкунӗсем тӑрӑх, ҫавӑн пекех тата колхозӑн шалти нушисем валли валеҫсе памалла.

Уборка пуҫланиччен тапхӑрта ӗҫкунӗсен минимумне тултарман тата тивӗҫлӗ сӑлтавсемсӗрех уборка вӑхӑтӗнче те ялхуҫалӑх ӗҫӗсене хутшӑнман колхозниксене аванс шучӗпе тырпул тата ытти ҫимӗҫсем памасӑр тӑма колхозсене сӗнес.

11. Колхоз правленийӗсене колхозниксене уборка вӑхӑтӗнче чӑннипе ӗҫлесе илнӗ ӗҫкунӗсемшӗн натурӑпа аванс памалли фондран тырпул тата ытти ҫимӗҫсем парас йӗркене, 1942 ҫулта пулнӑскерне, кӑҫал та сыхласа хӑварма сӗнес. Аванс памалли фондран уборка вӑхӑтӗнчи ӗҫкунӗсемшӗн тӗштырӑпа ытти ҫимӗҫсене виҫесемпе памалла:

а) тӗштырӑсене, вӑрлӑхлӑх акнӑ кукӑрӑксене, хӗвелҫаврӑнӑшне, сахӑр кӑшманне, йӗтӗн-кантӑра, кок-сагыза тата ытти техникӑллӑ культурӑсене (ҫӗрмамӑкӗсӗр пуҫне) пухса кӗртес ӗҫре ӗҫленӗшӗн кашни ӗҫкунӗ пуҫне 1,5 килограмм тӗштырӑ памалла;

б) ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ пухса кӗртес ӗҫре ӗҫленӗшӗн: Ленинград, Мускав, Калинин, Ярославль, Иваново, Киров, Горький, Смоленск, Тула, Рязань, Орел облаҫӗсенчи, Чӑваш тата Мари АССР-сенчи колхозсенче кашни ӗҫкунӗ пуҫне 5 килограмм таран ҫӗрулми е пахча-ҫимӗҫ памалла;

Ытти облаҫсемпе крайсенчи тата республикӑсенчи колхозсенче—3 килограмм таран ҫӗрулми е пахча-ҫимӗҫ памалла;

в) тӗштырра, ҫӗрулмине тата пахча-ҫимӗҫсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх уборка тапхӑрӗнче эрнере пӗрре валеҫсе памалла.

Тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра тунӑ ӗҫкунӗсемшӗн панӑ тырра, ҫӗрулмине тата пахча-ҫимӗҫе ҫулталӑк вӗҫленнӗ вӑхӑтра ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫнӗ чухне пӗтӗмпе тивекен тырпулсен хисепне кӗртеҫҫӗ.

12. Тырпулсене комбайнсемпе пухса кӗртнӗ ҫӗрте ӗҫлекен совхозсенчи трактористсене тата МТС-сен тухса ҫӳрекен участковӑй механикӗсене, комбайнсемпе тырпул пухса кӗртес плана вӑхӑтра тата лайӑх пахалӑхпа пурнӑҫлас ӗҫре пулнӑскерсене, натурӑпа премипамалли йӗркене, 1942 ҫулта пулнӑскерне, сыхласа хӑвармалла.

13. Колхозсемпе совхозсенче мӗнпур ялхуҫалӑх культурисен тупӑшне тӗплӗн шута илессине организацилемелле. Ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлев пункчӗсене тата колхозсенчи складсене ӑсатассине виҫе тӑрӑх тата накладной парса туса пымалла, ҫав накладнойӑн пӗр экземплярне, тӗштырра йышӑнни ҫинчен калакан распискӑпа пӗрле, колхоз счетоводне пӗр кунран кая юлмасӑр параҫҫӗ. Тырпулпа ытти ялхуҫалӑх продукчӗсене шута илмелли мӗнпур документсене укҫа документсем пекех сыхласа усрамалла.

14. Колхозсемпе совхозсен тӗштыррине тата ытти продукчӗсене ҫаратни чи усал преступлени пулса тӑнине шута илсе, СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ колхозсемпе совхозсен тырпулӗпе ытти ялхуҫалӑх продукчӗсене ҫаратакансене, ҫак тӗлӗшпе обществӑллӑ (социализмлӑ) харпӑрлӑха сыхласси ҫинчен 1932 ҫулхи августӑн 7-мӗшӗнче йышӑннӑ законпа усӑ курасси таранах, хаяррӑн ответ тыттарма суд органӗсене хушнӑ.

III.

Тӗштырӑсемпе ҫу тумалли культурӑсем хатӗрлес енӗпе

1. СССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариатне, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикӑсен Совнаркомӗсене, парти Обкомӗсемпе крайкомӗсене, союзлӑ республикӑсенчи компартисен Центральный Комитечӗсене, райисполкомсемпе парти райкомӗсене тӗштырӑсемпе ҫу тумалли культурӑсем хатӗрлемелли плана правительство кӑтартса панӑ срокра пӗр сӑмахсӑрах тултарассине пурнӑҫа кӗртме хушас, ҫакна тума тӗштырӑпа ҫу тумалли культурӑсене государствӑн хатӗрлев пункчӗсене турттарас ӗҫе уборкӑн малтанхи кунӗсенчен пуҫласах тытӑнмалла, государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем турттарса парас тӗлӗшпе кашни район валли, районра вара—кашни колхозпа совхоз валли пилӗккунлӑх заданисем тумалла, ҫав заданисене пӗр сӑмахсӑрах пурнӑҫа кӗрттерсе пымалла.

2. Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗпе унӑн вырӑнти органӗсене государствӑна тӗштырӑсемпе ҫу тумалли культурӑсем тӑратас тӗлӗшпе обязательствӑсем парассине чи кӗске срокра вӗҫлеме хушас. Колхозсен МТС ӗҫӗшӗн натуроплата мӗн чухлӗ памаллине шутласа хума колхозсенчи тырпул тухӑҫне разрядсем тӑрӑх уйӑрас ӗҫре Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн уполномоченнӑйӗсене облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи советпа парти организацийӗсен тивӗҫлӗ пулӑшу памалла; тырпулсен тухӑҫлӑхне пӗчӗклетсе кӑтартма, ҫапла вара натуроплата виҫине юриех пӗчӗклетме кирек мӗнле хӑтланнисене те, государствӑпа хирӗҫле хӑтланнисене, пурне те сирсе пырас пулать.

3. МТС директорӗсене МТС ӗҫӗшӗн колхозсене счетсем парас ӗҫе Наркомзаг уполномоченнӑйӗсенчен колхозсене тырпул тухӑҫӗ тӗлӗшпе хӑш разряда кӗртни ҫинчен извещенисем илнӗ хыҫҫӑн пӗр эрнелӗх срокран кая юлмасӑр туса пӗтерме, ҫулнӑшӑн, тырпула комбайнсемпе пухса кӗртнӗшӗн, авӑн ҫапнӑшӑн, тырӑ сӑвӑрнӑшӑн, тырӑ турттарса панӑшӑн вара—колхозсене счетсем парассине МТС ҫав ӗҫсене пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн пӗр эрнелӗх срокран кая юлмасӑр туса пӗтерме хушас.

4. Колхоз правленийӗсене тата совхоз директорӗсене, хатӗрлев планӗсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе тунӑ срокӗсене шута илсе, тӗштырӑсемпе ҫу тумалли культурӑсене хатӗрлев пункчӗсене турттарманшӑн ялхӑлӑх транспорт бригадисем организацилеме, вӗсене ертсе пымашкӑн колхозсенче колхоз правленийӗсен членӗсене уйӑрма хушас!

5. Тырпулсене пухса кӗртиччен тата государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем парса пӗтериччен колхозсемпе совхозсенчен тата МТС-сенчен ӗҫ вӑйӗсене, туртӑм вӑйӗсене тата транспорт хатӗрӗсене тырпул пухса кӗртес ӗҫпе тата государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем турттарса парас ӗҫсемпе сыхӑнман ытти мӗнле те пулин ӗҫе СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ирӗк памасӑр мобилизацилеме чарас.

6. Ҫапла йӗрке тӑвас: колхозсемпе совхозсем государствӑна паракан тӗштыррӑн тата ҫу тумалли культурӑсен малтанхи ушкӑнӗ колхозсемпе совхозсем государствӑран илнӗ ссудӑсене витнӗ ҫӗре, ҫавӑн пекех тата колхозсен обязательнӑй йӗркепе памалли, МТС ӗҫленӗшӗн памалли иртнӗ ҫулхи парӑмӗсене татлӑ ҫӗре каять. Малашне вара колхозсем паракан тӗштырӑсемпе ҫу тумалли культурӑсен тата ҫӗрулмин кашни ушкӑнӗнчен ҫуррине обязательнӑй поставкӑсен шутне кӗртмелле, тепӗр ҫур пайне МТС ӗҫленӗшӗн тӳленӗ шута кӗртмелле.

7. Ҫапла йӗрке тӑвас: колхозсем обязательнӑй поставка тӑрӑх тата МТС ӗҫленӗшӗн (авӑн ҫапнисӗр пуҫне) натуроплата тӳлес шутпа тӗштырӑ, хӗвелҫаврӑнӑш тата ытти культурӑсем панӑ чухне, ҫавӑн пекех тата колхозниксемпе единоличник хуҫалӑхӗсен обязательнӑй поставкисене тултарнӑ чухне алла илнӗ обязательствӑсенче тата МТС панӑ счетсенче кӑтартнӑ пек культурӑсем ҫеҫ памалла. Тулӑ, рис, пӑрҫа-ясмӑк, хуратул, вир, ырашпа кукуруза пек культурӑсене пурне те алла панӑ обязательствӑсенче тата МТС панӑ счетсенче кӑтартнӑ чухлӗ парса татмалла.

Тырӑ паракан килӗштернӗ тӑрӑх ытти тӗрлӗ тӗштырӑ культурисем вырӑнне кирек мӗнле урӑх культурӑсем те пама юрать; ҫу тумалли культурӑсем енӗпе, кӑтартса панӑ эквивалент тӑрӑх, ҫу тумалли пӗр йышши культура вырӑнне тепӗр йышши культура пама юрать.

8. Союззаготтранспорт автомашинисене ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлес ӗҫпе сыхӑнман грузсене турттарма ямашкӑн чарас, Союззаготтрансӑн 1942 ҫулхи тырпула иҫетри пунктсенчен турттарас ӗҫре ӗҫлемен автомашинисене пурне те совхозсенчен тырӑ турттарма ямалла тӑвас. Союззаготтрансӑн автомашинисене, совхозсен автомашинисене тата чӗрӗ туртӑм вӑйне совхозсем государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли планӗсене пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртсе ҫитериччен урӑх ӗҫсене яма чарас.

9. СССР Совхозсен Халӑх Комиссариатне тырӑ усрама юрӑхлӑ складсене пӗтӗмпе 500.000 тонна вырнаҫмалӑх вӑхӑтлӑха усӑ курмашкӑн Наркомзаг аллине пама хушас; ҫайран вӗсенчи тырра, совхозсен транспорчӗпе усӑ курса, Заготзернон чугунҫулсемпе шыв ҫулӗсем ҫинчи пункчӗсене турттарса тухмалла. СССР Совхозсен Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсенче Наркомзагӑн вӑхӑтлӑха хатӗрлев пункчӗсем организацилемелле, ҫав пунктсене ҫӳлте кӑтартнӑ совхозсенчи 500.000 тонна тӗштырӑ йышӑнмалла. Тырра совхозсенчен турттарса тухиччен, Наркомзаг склачӗсен заведующийӗсем ыйтнӑ тӑрӑх, государство тыррине тивӗтес тата тасатас ӗҫсене тума СССР Совхозсен Наркомачӗн рабочисемпе механизмсем кирлӗ таран уйӑрса памалла.

10. Ҫапла йӗрке тӑвас: наркоматсен совхозӗсемпе подсобнӑй хуҫалӑхӗсем, хуласем таврашӗнчи совхозсен облаҫри (крайри тата республикӑри) тресӗчӗсем, предприятисемпе учрежденисен тата организацисен хуҫалӑхӗсем, вӗсем тӗштырӑ тата ҫу тумалли культурӑсем акнӑ пулсан, хӑйсем усӑ куракан ҫӗрӗн кашни гектарӗнчен, МТС-сем ӗҫлесе тӑракан колхозсемшӗн тунӑ обязательнӑй поставка нормисен ҫурри чухлӗ тӗштырӑ, рис, хӗвелҫаврӑнӑшӗ тата ҫу тумалли культурӑсем памалла, вӗренӳ заведенийӗсен подсобнӑй хуҫалӑхӗсене (вӗсем 20 гектартан ытла мар акнӑ пулсан), сывлӑха упракан заведенисен, ача яслисен, инвалидсемпе ватӑ колхозниксен ҫурчӗсен подсобнӑй хуҫалӑхӗсене государствӑна тырпул парассинчен хӑтараҫҫӗ.

Хуласем таврашӗнчи совхозсене тата ҫак пунктра кӑтартнӑ подсобнӑй хуҫалӑхсене асӑннӑ хуҫалӑхсенчи ҫӗр лаптӑкӗсенчен илнӗ тулӑпа ырашпа расходлама чарас; ҫав культурӑсене, промфинплана пӑхнӑ виҫе чухлӗ вӑрлӑх хӑварнисӗр пуҫне, ҫав культурӑсене памалли планран иртерсе, пӗтӗмӗшпех государствӑна пама хушас. Планран иртерсе панӑ тулӑпа ыраш вырӑнне Наркомзагӑн планран иртерсе панӑ хисепӗн 50 процентӗ чухлӗ вӗсене концентрациллӗ апат-ҫимӗҫсем памалла, анчах хула таврашӗнчи совхозсемпе подсобнӑй хуҫалӑхсене чӑннипе кирлӗ пулнинчен ытлашши памалла мар.

Хуласем таврашӗнчи совхозсемпе подсобнӑй хуҫалӑхсене ытлашши юлнӑ тӗштырӑсемпе ҫу тумалли культурӑсене, государство умӗнчи обязательствӑсене тултарнӑ хыҫҫӑн, вӑрлӑхпа фураж фончӗсене хывнӑ хыҫҫӑн юлнӑскерсене, пӗрле апатланас ӗҫ валли расходлама ирӗк парас.

11. Хӗвелҫаврӑнӑш тата ҫу тумалли ытти культурӑсем тӑратас енӗпе парӑмлӑ юлнӑ колхозсенчен, вӗсем 1943 ҫулта ҫу тумалли культурӑсем акман пулсан, ҫав культурӑсем вырӑнне тӗштырӑсем йышӑнма СССР Наркомзагне ирӗк парас, пӗр центнер ҫу тумалли культура вырӑнне пӗр центнер тӗштырӑ илмелле, вӗсен хакӗнчи уйрӑмлӑха колхозсене укҫан тӳлеттермелле.

12. Хатӗрлев Халӑх Комиссариатне тырпулсем йышӑнма тытӑниччен вунӑ кун малтан элеваторсемпе хатӗрлев пункчӗсене пӗтӗмӗшпех хатӗрлесе ҫитерме хушас.

13. Колхозсемпе совхозсен государствӑпа тӗштырӑ тата ҫу тумалли культурӑсем парас ӗҫне ҫӑмӑллатас шутпа, СССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариатне чугунҫул станцийӗсенче, разъездсемпе пристаньсенче ҫӗнӗрен хатӗрлев пункчӗсем уҫма хушас. Ҫулйӗр Халӑх Комиссариатне, Юханшыв Халӑх Комиссариатне, облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикӑсен Совнаркомӗсене станцисенчи, разъездсенчи тата пристаньсенчи пур пек складсене вӗсенче тӗштырӑпа ҫу тумалли культурӑсем йышӑнмалли хатӗрлев пункчӗсем организацилемешкӗн августӑн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр Наркомзаг аллине вӑхӑтлӑха усӑ курма пама хушас.

14. Хатӗрлевсем вӑхӑтӗнче тырӑ турттарма граждански предприятисемпе учрежденисен юсавлӑ автотранспортне 50 процента ҫити тата оборона предприятийӗсемпе строительствисен юсавлӑ транспортне 30 процента ҫити мобилизацилеме облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикӑсен Совнаркомӗсене ирӗк парас.

IV.

Ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсене пухса кӗртес тата вӗсене хатӗрлес енӗпе

1. Ҫӗрулмине ҫавӑн пекех тата пахча-ҫимӗҫсене кӗркуннехи сивӗсем ҫитиччен пухса кӗртсе хранилищӗсене хумалла. Кун каҫиччен кӑларнӑ ҫӗрулмипе пухнӑ пахча-ҫимӗҫсене куллен вырӑна кӗртсе хумалла. Ҫӗрулми кӑларнӑ хыҫҫӑн участоксене сӳрелесе пухса ҫӗнӗрен ҫӗлле тухнӑ ҫӗрулмисене пухса пымалла.

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнче

1943 ҫулта тырпулсене пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен

ЮЛАШКИ

2. 1943 ҫулта ҫӗрулми лартнӑ ҫӗр лаптӑкӗсенчен ҫӗрулми вӑрлӑхӗн участокӗсене 15 процент чухлӗ уйӑрса хӑвармалла тӑвас.

Куйбышев, Саратов, Сталинград, Чкалов, Пенза, Тамбов, Воронеж, Ростов, Ворошиловград облаҫӗсенче, Краснодарпа Ставрополь крайӗсенче, Тутар тата Калмык АССР-сенче, Грузин, Армян, Азербайджан, Туркмен, Узбек, Таджик, Киргиз ССР-сенче, Казах ССР-ӗнчи Джамбул, Кӑнтӑр Казахстан, Актюбинск, Хӗвеланӑҫ Казахстан, Кустанай, Караганда облаҫӗсенче ҫӗрулми лартмалли ҫӗрлаптӑкӗсене малалла сарас шутпа, ҫав облаҫсенчи колхозсене 1943 ҫулта ҫӗрулми лартнӑ ҫӗрлаптӑкӗсенчен ҫӗрулми вӑрлӑхӗсен участокӗсене 18 процента ҫити уйӑрса хӑварма ирӗк парас.

Вӑрлӑхлӑх лартнӑ участоксенчен пухса илнӗ ҫӗрулмипе усӑ курмалли йӗркесене тӗштырӑ культурисем тӗлӗшпе тунӑ йӗркесем пекех тӑвас.

3. Хатӗрлев Халӑх Комиссариатне пахча-ҫимӗҫ культурисен вӑрлӑхӗсене хатӗрлев организацийӗсене контрактаци договорӗсем тӑрӑх панӑшӑн вӑрлӑх акса тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен колхозсене, ССР Хатӗрлев Комиссариачӗпе Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ тунӑ эквивалентсем тӑрӑх, государствӑна обязательнӑй йӗркепе пахча-ҫимӗҫсем пани вырӑнне шутлама хушас.

ССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариатне Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе пӗрле пахча-ҫимӗҫ продукцийӗпе пахча-ҫимӗҫ культурисен вӑрлӑхӗсене улӑштармалли эквивалентсене, 1942 ҫулта туманнисене, пулӑхлӑх сроксра тума хушас.

Райисполком председателӗсен, Наркомзагӑн районсенчи уполномоченнӑйӗсемпе тата «Сортсемовощь» конторисен управляющийӗсемпе пӗрле, колхозсен государствӑна пахча-ҫимӗҫсем парас вырӑнне пахча-ҫимӗҫ культурисен вӑрлӑхӗсене мӗн чухлӗ памаллине 1943 ҫулхи июлӗн 20-мӗшӗччен палӑртса хумалла.

Наркомзагӑн 1943 ҫулхи июлӗн 25-мӗшӗччен колхозсем «Сортсемовощь» конторисемпе тунӑ контрактаци договорӗнче кӑтартнӑ сроксем тӑрӑх пахча-ҫимӗҫ культурисен вӑрлӑхӗсене памалли сроксене палӑртса хумалла.

Пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем акса тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен колхозсене, нумай ҫул хушши ӳсекен культурӑсем енӗпе вӑрлӑхлӑх акса хӑвармалли плана тултаричче е пӗр ҫул хушши ӳсекен культурӑсен (помидор, хӑяр т. ыт. те) вӑрлӑхӗсене париччен, контрактацилле ҫӗрлаптӑкӗ ҫинчи вӑрлӑхлӑх акнӑ пахча-ҫимӗҫсемпе ытти мӗнле те пулин урӑх енӗпе усӑ курма чарас.

4. Пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем акса тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлемен колхозсен, вӗсен пахча-ҫимӗҫсем пулсан, 1944 ҫулта лартмашкӑн хӑйсене валли пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем хатӗрлесе хӑвармалла, пахча-ҫимӗҫе пухса кӗртнӗ хыҫҫӑнах 1944 ҫулта ҫуркунне кӑларса лартма вӑрлӑхлӑх хунав тымарсем уйӑрса хӑвармалла.

ССР Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗпе Центросоюза колхозсемпе совхозсенчен государствӑна памалли план шучӗпе типӗтнӗ ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем йышӑнма ирӗк парас.

V.

Техникӑллӑ культурӑсемпе вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ курӑксене пухса кӗртес тата хатӗрлес енӗпе

а) Сахӑр кӑшманӗ енӗпе

1. Сахӑр кӑшманне Узбек ССР-ӗнче августӑн 15—20-мӗшӗсенче, Киргиз тата Казах ССР-сенче (шӑваракан районсенче) — августӑн 15-мӗшӗнче тата ССР Союзӗн ытти районӗсенче сентябрӗн 1—10-мӗшӗсенче кӑларма пуҫламалла тӑвас.

Сахӑр кӑшманне ҫак сроксенче кӑларса тата турттарса пӗтермелле:

	кӑлармалла:	турттармалла
Узбек, Киргиз тата Казах ССР-сенче .	15.XI	15.XII
Грузин, Армян ССР-сенче тата Краснодар крайӗнче . . .	5.XI	25.XI
Алтай, Красноярск тата Хабаровск крайӗсенче, Кемерово, Новосибирск облаҫӗсенче тата Бурят-Монгол АССР-ӗнче	10.X	10.XI
ССР Союзӗн ытти районӗсенче . . .	20.X	20.XI

2. Кӑшман лартса тӑвакан районсенчи облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикӑсен Совнаркомӗсене ҫапла тума хушас:

а) сахӑр кӑшманне кӑларма пуҫламалли сроксене уйрӑм районсемпе колхозсем тӑрӑх кӑшман мӗнле ӳснине кура палӑртса тухмалла, анчах та ҫакна шута илмелле: сахӑр завочӗсене ӗҫе янӑ тӗле завод территоринче 5 кунлӑхран кая мар кӑшман запасӗ пулмалла, кайран вара сахӑр завочӗсене пӗр таттисӑрсӑр кӑшман парса тӑмалла;

б) кашни района сахӑр кӑшманӗ кӑларма тата турттарма уйӑхлӑх заданисем тата пилӗккунлӑх графиксем ҫирӗплетсе памалла, ӑна пурнӑҫа кӗртнине ҫирӗппӗн тӗрӗслесе тӑмалла;

в) ахаль урапасене, тракторпа турттармалли урапасене, автомашинӑсене юсас тата ҫӗнӗрен тӑвас ӗҫе, ҫавӑн пекех тата сахӑр кӑшманӗ турттармалли тракторсен пӗр пайне юсас ӗҫе кӑшман кӑларма пуҫличчен 5 кун малтан вӗҫлемелле;

г) 1943 ҫулхи августӑн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр ҫулсене, кӗперсене, ҫавӑн пекех тата кӑшман хатӗрлекен пунктсем патне пыракан ҫулсене юсас ӗҫе вӗҫлемелле;

д) сахӑр завочӗсемпе кӑшман хатӗрлекен пунктсен кун каҫиччен турттарса пама ӗлкӗреймен кӑшмана ӑна шӑварса ӳстерекен районсенче—3—5 тонна чухлӗ тата шӑвармасӑр ӳстерекен районсенче—сахалтан та 2 тонна чухлӗ хисепе ҫулсем патӗнче пысӑк купасем туса купаламалла.

3. Сахӑр кӑшманне хӑвӑртрах кӑларас, ҫавӑн пекех тата ӑна пысӑк купасене купалас ӗҫе хавхалантарса пырас шутпа, колхозсене ҫакӑн пек тума сӗнес: контрактаци тата натуроплата йӗркипе сахӑр кӑшманӗ панӑшӑн колхоза тивекен сахӑртан сахӑр кӑшманӗ кӑларнӑ тата тасатнӑ ҫӗрте ӗҫлекен колхозниксене, ӗҫкунӗсем тӑрӑх сахӑр пайӗсӗр пуҫне, кӑларса тасатнӑ кӑшманӑн кашни центнерӗшӗн 40-шар грамм сахӑр памалла, пысӑк купасене купаланӑ кӑшманӑн кашни центнерӗшӗн 20-шер грамм хушса сахӑр памалла.

Колхозниксене сахӑр парас ӗҫе кашни вунӑ кунрах туса ирттермелле. Ҫавӑнпа та сахӑр завочӗсен колхозсене кӑшманӑн кашни центнерӗшӗн аванс шучӗпе 60-шар грамм сахӑр памалла, ҫак ӗҫе сахӑр завочӗ ӗҫлеме пуҫланӑранпа иккӗмӗш вунӑкунлӑхра тытӑнмалла. Кӑшмана пӗтӗмпех парса пӗтерни хыҫҫӑн сахӑр завочӗсен колхозсемпе татӑклӑ расчет тумалла.

4. Колхозсем кондицие ларман кӑшман илсе пырсан, хатӗрлев пункчӗ хушнӑ тӑрӑх, ҫав кӑшмана сортлас ӗҫе колхозсен вӑйӗпе туса ирттермелле, сортлас ӗҫе пурнӑҫа кӗрмесен вара кондицие лармалли кӑшманшӑн сахӑр палӑртнӑ нормӑн виҫҫӗмӗш пайӗ чухлӗ чакарса памалла.

5. Сахӑр завочӗсене тата кӑшман хатӗрлекен пунктсене турттарса пынӑ кашни центнер кӑшманшӑн лавӑҫсене, автомашинӑсен шоферӗсемпе грузчиксене, контрактаци договорӗ тӑрӑх колхоза тивекен сахӑр шучӗпе, ҫакӑн чухлӗ сахӑр памалла:

(грампа)	лавӑҫсене	шоферсене	грузчиксене
6 километр таран турттарсан . .	10	2	2
6-ран 15 километр таран .	20	5	3
15 километртан ытларах турттарсан . .	40	8	4

Ҫакӑн чухлӗ сахӑра лавӑҫсене вӗсем кӑшмана хӑйсемех тиеҫҫӗ тата хӑйсемех пушатаҫҫӗ пулсан кӑна параҫҫӗ.

Сахӑр кӑшманне турттарнӑшӑн тивекен сахӑра сахӑр завочӗсем лавӑҫсене тӳрех, вӗсем заводсемпе кӑшман хатӗрлекен пунктсене турттарса пынӑ кӑшман хисепне шута илсе, тӳлеҫҫӗ, укҫан памалли тӳлеве вара палӑртнӑ тарифӑн 50 процентӗ чухлӗ кӑна лавӑҫсене хӑйсене тӳлеҫҫӗ.

6. Сахӑр кӑшманӗ пухса илес ӗҫре ӗҫлекен колхозниксене пама илнӗ сахӑра урӑх ҫӗре тӑкаклама колхоз председателӗсене чарас.

б) Ҫӗрмамӑкӗ, йӗтӗн-долгунец тата кантӑр енӗпе

1. Ҫӗрмамӑкне пухса кӗртнӗ чухне унӑн кашни сортне уйрӑмӑн пухмалла, сортсене пӑтраштарса ямалла мар, ҫавӑн пекех тата чирлӗ коробкӑсемпе сыввисене пӑтраштарса ямалла мар.

2. Иртнӗ ҫулсенчен юлнӑ ҫӗрмамӑк-сыреца хатӗрлев пункчӗсенчен заводсене турттарас ӗҫе сентябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗҫлемелле, ҫапла вара ҫӗнӗ ҫӗрмамӑкӗ-сырец илсе килнӗ тӗле ҫӗрмамӑкне хумалли складсемпе ҫурт-йӗрсене пурне те пӗтӗмпех юсаса, тасатса тата дезинфекци туса хатӗрлемелле. Складсем ҫитмеҫҫӗ пулсан, вӑхӑтлӑх сарайсемпе навессем туса хатӗрлемелле, ҫавӑн пекех тата ытти лупӑ ҫуртйӗрсемпе те усӑ курмалла.

3. Ҫӗрмамӑкне шӑварса ӳстерекен районсенче кӗрхи ҫӗртмене вӑхӑтра туса ирттерес шутпа, колхозсемпе совхозсене ҫакӑн пек тума сӗнес: ноябрӗн 20-мӗшӗнчен кая юлмасӑр хирсенчен, унта уҫӑлса ҫитмен уйрӑм коробкӑсем пур пулин те, гуза-пайӑна пухса кӗртмелле, вӗсене кайран тасатмалла; ҫӗрмамӑк-сырецӑ ноябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех пухса илмелле тата хирсене ҫӗрмамӑк тунисенчен тасатас ӗҫе декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӗҫлемелле.

4. Кашни МТС-па колхозрах йӗтӗнпе кантӑра машинӑпа тата алӑпа пухса кӗртмелли план туса палӑртмалла, машинӑпа пухса кӗртме пӗр тикӗс ӳснӗ участоксене суйласа илмелле.

5. Йӗтӗнпе кантӑра ҫапас ӗҫе вӗсене пӗтӗмпе пухса кӗртессине кӗтсе тӑмасӑр тытӑнмалла, йӗтӗнпе кантӑра пӗтӗмпех пухса кӗртнӗ хыҫҫӑн вунӑ кунран кая юлмасӑр вӗсене ҫапса пӗтермелле.

6. Пӗтӗм йӗтӗн-долгунеца сарса хурас тата шыва хутас ӗҫе сентябрӗн 10-мӗшӗнчен кая юлмасӑр тата кантӑра шыва хутас ӗҫе октябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗҫлемелле.

Йӗтӗн сармалли лайӑх вырӑнсем ҫук колхозсене ӑна сиве шыва хутса пултарас меслетпе усӑ курма сӗнес. Сайра акса вӑрлӑхлӑх ӳстернӗ кантӑра, шыва хутнипе пӗрлех, хӗлле юр ҫине сарса пултарас меслетпе усӑ курмалла.

7. Архангельск, Вологда, Киров, Молотов, Новосибирск, Омск тата Иркутск облаҫӗсенчи, Алтай тата Красноярск крайӗсенчи, Коми тата Удмурт АССР-сенчи колхозсене ҫапла тума ирӗк парас: ҫапса илнӗ йӗтӗнӗн 30 процентне сарса пултарас ӗҫе тепӗр ҫула хӑварма юрать, ҫав продукцие государствӑна обязательнӑй йӗркепе килес ҫулти августӑн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр памалла.

8. ССР Совнаркомӗ 1942 ҫулти январӗн 11-мӗшӗнче «1941 ҫулта туса илнӗ йӗтӗнпе кантӑра хатӗрлес тата малтанлӑха ӗҫлесе тӑвас ӗҫе хавхалантарасси ҫинчен» йышӑннӑ постановление 1943—1944 ҫулсенче те вӑйра хӑварас.

9. ССР Наркомзагне ҫапла тума хушас: йӗтӗн вӑрлӑхӗ акса ӳстерекен колхозсене, вӗсем йӗтӗн вӑрлӑхне пӗтӗмпех государствӑна параҫҫӗ пулсан, обязательнӑй поставкӑран ирттерсе панӑ йӗтӗн вӑрлӑхӗн кашни центнерӗшӗн ҫавӑн чухлех йӗтӗнӗн сортлӑ мар вӑрлӑхне памалла.

в) Табак тата махорка енӗпе

1. Табакпа махоркӑна вӗсем техника енӗпе пӗтӗмӗшпех пулса ҫитсен пухса илмелле, вӗсене ытлашши пулса кайма памалла мар тата пулса ҫитмен табакпа махоркӑна та пухса илмелле мар.

Табакӑн ҫулҫисене 3—4 хутчен пухса илмелле, уйрӑм вырӑнсенче вара, колхозсенче ӗҫ вӑйӗпе шпагатсем ҫитмесҫӗ пулсан,—ир акнӑ лаптӑксенче тӗмӗн-тӗмӗн пухса кӗртме ирӗк парас.

Табак промышленноҫӗн чӗртавар ресурсӗсене ӳстерес шутпа, табака хирте пӑхса ӳстернӗ чухне татса илнӗ тӑррисене тата хунавӗсене типӗтмелле, ҫавӑн пекех тата ир акнӑ лаптӑксенче махоркӑна табака иккӗмӗш хут ӳстерсе пухса илмелле.

2. Табакпа махоркӑна пухса кӗрес ӗҫе ҫак сроксенче вӗҫлемелле тӑвас:

а) **Табака**—Казах, Узбек, Киргиз, Таджик тата Туркмен ССР-сенче, Алтай тата Хабаровск крайӗсенче, Сталинград тата Воронеж облаҫӗсенче, Калмык АССР-ӗнче—сентябрӗн 20-мӗшӗнчен кая мар пухса кӗртмелле. Армян ССР-че тата Краснодар крайӗнче—октябрӗн 1-мӗшӗнчен кая мар; Грузин тата Азербайджан ССР-сенче тата Дагестан АССР-ӗнче — октябрӗн 10-мӗшӗнчен кая мар пухса кӗртмелле;

б) **Махоркӑна**—Алтай, Красноярск тата Хабаровск крайӗсенче, Омск, Курган, Кемерово, Вологда, Новосибирск, Иркутск, Чита, Свердловск тата Молотов облаҫӗсенче, Удмурт тата Бурят-Монгол АССР-сенче сентябрӗн 1-мӗшӗнчен кая мар, ытти районсенче пуринче те—сентябрӗн 20-мӗшӗнчен кая мар пухса кӗртмелле.

г) кок-сагыз енӗпе

1. Кок-сагыза ҫак сроксенче пухса пӗтермелле: икӗ ҫул ӳсекеннине—унӑн вӑрлӑхӗ пӗтӗмпех пулса ҫитнӗ хыҫҫӑн икӗ эрне хушшинче, пӗр ҫул ӳсеккеннине — пур районсенче те октябрӗн 5-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пухса илмелле; Кемерово, Курган, Новосибирск, Омск, Ҫурҫӗр Казахстан, Кустанай тата Молотов облаҫӗсенче — пӗр ҫул ӳсекен кок-сагыза сентябрӗн 25-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пухса кӗмелле.

Кок-сагыз тымарӗсене пухса илнӗ хыҫҫӑн вӑл участоксене сӳрелемелле, тепӗр хут сухаламалла, ҫиеле тухакан кок-сагыз тымарӗсене пухса илмелле.

2. ССР Наркомрезинпромне июлӗн 20-мӗшӗ тӗлне кок-сагыз вӑрлӑхӗпе тымарне йышӑнакан пунктсене хатӗрлесе ҫитерме хушас, вӗсене складсемпе тарасасем туса памалла.

3. Колхозсен хӑйсен вӑрлӑхӗ пулмалла тӑвас шутпа, 1943 ҫултан пуҫласа, килес ҫул акмалли вӑрлӑха колхозсене кок-сагыз хатӗрлевӗ пынӑ вӑхӑтрах колхозсем хӑйсем паракан вӑрлӑхран уйӑрса памалла тӑвас.

д) Вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ курӑксем енӗпе

Курӑксен вӑрлӑхӗ тӑкӑнса ан пӗттӗр тесе, вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ клевера, люцернӑна, тимофеевкӑна тата житняка 5 кунран ытла мар вӑхӑтра пухса кӗртмелле, нумай ҫул тата пӗр ҫул ӳсекен курӑксен вӑрлӑхӗсене ҫулма пуҫланӑ хыҫҫӑн 20 кун хушшинче ҫапса пӗтермелле, комбайнсене, молотилкӑсене тата ытти машинӑсене нумай ҫул ӳсекен курӑксен вӑрлӑхӗсене пухса илме, ҫапма тата шӗкӗлчеме вӑхӑтра майлаштарса хатӗрлемелле.

МТС-семпе совхозсен тата подсобнӑй хуҫалӑхсен директорӗсене клевер вӑрлӑхне ҫапнӑ ҫӗрте МК-1100 молотилкӑсемпе туллин усӑ курма хушас, МТС-семпе колхозсенче тата совхозсемпе подсобнӑй хуҫалӑхсенче клевер шӗкӗлчекен машинӑсемпе приспособленисене пӗтӗмпех юсаса усӑ курмалла.

* * *

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫак постановление яллӑ вырӑнсенчи партипе комсомол пухӑвӗсенче, колхозниксен тата совхозсемпе МТС-сенчи рабочисен, специалистсен, служащисен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗсенче сӳтсе-явса, тырпулсене пухса кӗртес тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ решенисем йышӑнма хушнӑ.

Кашни кун уйра 16 сехетрен кая мар ӗҫлер, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерер!

Ӗҫ йӗрки ҫирӗп пултӑр

ВӐРМАР, июлӗн 20-мӗшӗ. Районри 20 колхоз ыраш вырма тухнӑ. «Свет» колхоз пӗр кун хушшинче — 12 гектар, Фрунзе, Ворошилов ячӗсемпе тӑракан колхозсем 7—10 гектар ыраш вырчӗҫ.

Малта пыракан колхозсем уборка ӗҫӗсене хӑвӑрт вӑйлатса пыраҫҫӗ, тырра пӗр тӑккаламасӑр вырса пухасси шӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Тырра тӗллӗн-тӗллӗн суйласа вырма районри пур колхозсен те паянах тухма пулать. Анчах хӑш-пӗр колхозсен руководителӗсем уборкӑн малтанхи кунӗнчех ӗҫ вӑйне вырнаҫтарма пӗлменнине кӑтартрӗҫ. Ыраш тӗллӗн-тӗллӗн вырмалла пулса ҫитнӗ пулин те, «Исварин» колхоз председателӗ халӑха тырӑ вырма организацилемерӗ. Ӗнер уйра 11 колхозник ҫеҫ ӗҫленӗ. Паян та ӗҫре йӗркелӗх ҫук, ҫынсене звеносем тӑрӑх уйӑрман.

А. С.

11 колхоз тырӑ вырма тухнӑ

КАНАШ, июлӗн 20-мӗшӗ. (**Хамӑр корр., телефонпа**). Районра 11 колхоз вырӑнӑн-вырӑнӑн пулса ҫитнӗ участоксене суйласа илсе тырӑ вырма тухрӗҫ. Асхвари «Хӗрлӗ хӗм» колхоз икӗ кун хушшинче 16 гектар вырчӗ. Ку колхоз уйхир ӗҫне лайӑх хатӗрленсе тухнӑ. Пур бригадӑсенче те пӗрер жнейка ӗҫлет. Уборкӑн малтанхи кунӗнче кашни бригадӑрах пӗрер номер стена хаҫачӗ тухнӑ. Шипцова, Степанов, Васильев агитаторсем тырӑ выракан колхозниксем хушшинче ӑнлантарулла ӗҫе организацилеҫҫӗ.

Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз 6 гектар, Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 4 гектар, «Хӗрлӗ Ҫар» колхоз 10 гектар ыраш вырчӗҫ. Шмидт ячӗпе тӑракан колхоз пӗлтӗрхи уборкӑра пулнӑ йӑнӑшсене шута илсе, кӑҫал тырпула пухса кӗртме лайӑх хатӗрленсе тухрӗ. Пӗр кун хушшинче вӑл вырӑнӑн-вырӑнӑн пулса ҫитнӗ ыраша 14 гектар вырнӑ. Ҫак кунсенчех ытти колхозсем те тырӑ вырма тухаҫҫӗ.

Хӗрсех тырӑ вырма пуҫларӗҫ

ТӐВАЙ, июлӗн 20-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Тырра уйрӑм участоксем тӑрӑх суйласа вырма пур колхозсенче те пекех тытӑннӑ. Ленин ячӗпе тӑракан колхоз ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстерсе пырать. Паянхи куна кунта 67 гектар ыраш вырнӑ та ӗнтӗ. Жнейкӑсем талӑкра 18—20 сехетрен кая мар ӗҫлеҫҫӗ. Уйрах апатланаҫҫӗ. Ӗнер колхозра «Ленин ҫулӗпе» ятлӑ стена хаҫачӗ тухрӗ. Унта ӗҫре малта пыракансене кӑтартса панӑ.

Ҫавӑн пекех «Культура», «Новый путь», «Искра Ильича» колхозсенче те хӗрсех тырӑ выраҫҫӗ. Машинӑсене пурне те ӗҫе янӑ. Тепрер ик-виҫӗ кунтан ҫӗнӗ тырра итемсем ҫине кӗртсе ҫапма тытӑнаҫҫӗ.

Анчах та районра «тырӑ халӗ симӗс-ха» тесе лӑпланса ларакан руководительсем те пур. Вӗсем хӑйсен сиенлӗ шухӑшӗсемпе ӗҫе чарса тӑраҫҫӗ. «Красная Чувашия» колхозӑн пур бригадисем те тырӑ вырма тухма шултараҫҫӗ. Анчах 13 бригадӑран халӗ 8 бригади ҫеҫ суйласа вырма тытӑннӑ. Тушкильт ялсоветӗнчи «Красная Армия», «Звезда» колхозсенче те уя сахаллӑн тухнӑ. Ҫӗнӗ Сырма ялсоветӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан тата «Трудовой путь» колхозсенче тырӑ пулса ҫитнӗ пулсан та вырма тухмасӑр тӑраҫҫӗ.

А. КАХОВСКИЙ.

Кировецсем ӗҫне калаинне сӳтсе-явасҫӗ

Якутин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен хӗрлӗ ялавлӑ завод коллективӗ Мускаври С. М. Киров ячӗпе тӑракан «Динамо» заводри рабочисен ӗҫне калаҫнине сӳтсе-явса ҫак ӗҫе ҫӗнӗ [illegible]

Ҫак паха чӗнӗве рабочисемпе работницӑсем пысӑк хавхаланупа кӗтсе илчӗҫ. Кинсбургский начальник пулса ӗҫлекен цехри стахановка-бобровщица Поновзарева юлташ июль уйӑхӗнче планне 160 процент тултарма пулса, митинга [illegible]

— Эпир [illegible] ҫӗршыва Гитлер [illegible] хӑвармӑпӑр [illegible], — терӗ.

Ҫак цех коллективӗ июль уйӑхӗн производство планне 118,7 процент пурнӑҫларӗ. Июль уйӑхӗнче вӑл заданине 120 процент пурнӑҫлама пулать. Просяк начальник пулса ӗҫлекен цехра рабочисене работниксем те хӑйсен ӗҫне обязательствӑсем илчӗҫ. 70 ҫулти рабочи Шестаков юлташ, производство планне 250 процент пурнӑҫласа пыраканскер, митинга тухса [illegible]

— Эпӗ июль уйӑхӗнче производство планне 300 процент тултарма тӑрӑшӑп, — терӗ.

Завод коллективӗ [illegible] кварталти планне сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫласа [illegible]

Е. ОГОРОДНИКОВА.

Ют ҫӗршывсенче

Союзниксен Сицилири войскисем ҫапӑҫни

ЛОНДОН, июлӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Алжирти радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин 8-мӗш ҫарӗн танк чаҫӗсем Катания сумӗнчи вырӑнсене пырса кӗнӗ. Генерал Монтгомери войскисем Джербинири аэродромсен ушкӑнне ҫавӑрса илме тӑрӑшаҫҫӗ. Катанирен Мессинӑна тинӗс хӗррипе пыракан ҫула Англи флочӗ вӗҫӗмсӗр персе тӑрать.

Информаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи войскисем Катания патнелле кӑнтӑр енчен пыраҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах Англи флочӗ хулапа ун коммуникацийӗсене ҫурҫӗр енчен перет.

Союзниксен войскисем Агрижентӑна йышӑнса илнӗ. Америка чаҫӗсем Эннӑна ҫитесси 17 миля анчах юлнӑ. Энна вӑл Сицили утравӗн географилле центрӗ, коммуникацисен паха тӗвви. Ӗнер Эннӑран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енче тӑшманӑн вӑйлӑ контратакине сирсе янӑ хыҫҫӑн Америка чаҫӗсем малалла тапӑнса пыраҫҫӗ.

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Сицили утравӗ ҫинче Англипе Америкӑн пӗрлешӳллӗ ҫар администрацийӗ туса хунӑ. Администраци пуҫӗнче Англин генерал-майорӗ Реннелл тӑрать. Ку администраци фашистсен вырӑнти организацийӗсене пурне те салатса ярать.

Союзниксен авиацийӗ Рима тапӑнни

ЛОНДОН, июлӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен войскисен Ҫурҫӗр Африкӑри штабӗ ҫапла пӗлтерет: паян Вӑтаҫӗр тинӗсри сывлӑш флотне кӗрекен йывӑр бомбардировщиксем Римпа ун таврашӗнчи ҫар объекчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчен тӗнчел держависемпӗн паха вырӑнта тӑракан сортировочнӑй станцине ҫӗмӗресси тӗп тӗллев пулнӑ. Бомбӑсем пӑрахасси ҫинчен хула халӑхне малтан листовкӑсем пӑрахса пӗлтернӗ. Тӗнче культура памятникӗсене ҫӗмӗресрен сыхланарах тӑмалли ҫинчен пилотсемпе бомбардировщиксене малтанах астутарса каланӑ пулнӑ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, бомбардировщиксен малтанхи ушкӑнӗ ирхине 9 сехет те 13 минутӑра вӗҫсе тухса кайнӑ. Итали столици тӗлне вӗҫсе ҫитсен, вӗсем объектсем ҫине бомба пӑрахнӑ май вӗҫсе ҫавӑрӑннӑ, кашни бомбине тӗл тивертме тӑрӑшнӑ. Римӑн транспортпа ҫар промышленность районӗ бомба пӑрахмалли тӗп объект пулнӑ. Ку объектсене Муссолини юри хула хушшине пытарса вырнаҫтарнӑ пулнӑ, анчах союзниксен командованийӗ Италин ҫак юлашки шултӑра чугунҫул центрне те хыттӑн ҫапса ҫӗмӗрме вӑхӑт ҫитрӗ тесе шутланӑ. Римри ҫар объекчӗсем ҫине 350 тоннӑна яхӑн бомба пӑрахнӑ.

Союзниксен авиацийӗн ӗҫӗсем

ЛОНДОН, июлӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен авиацийӗ юлашки тӑватӑ кун хушшинче Неапольпе ун ҫывӑхӗнчи ҫар объекчӗсене ҫине-ҫинех шутсӑр вӑйлӑн вӗҫсе пырса тапӑннӑ.

Ӗнерхи кун ирхине Неаполь ҫине 500 бомбардировщик тапӑннӑ. Хуларан мӑкӑрланса тухнӑ тӗтӗм 4 пин метр таран пӗлӗтелле ҫӗкленнӗ. Сехет ҫурӑ хушши пӑрахса тӑнӑ бомбӑсем хушшинче икӗ ҫурӑ тоннӑллисем пулнӑ.

Июлӗн 16-мӗшӗнче союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн Барири тата Кротонри аэродромӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ, июлӗн 18-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Реджо-ди-Калабрири тӗрлӗ ҫар объекчӗсене тапӑннӑ.

Июлӗн 17-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Италин электрификацилленӗ чугунҫулӗсене электроэнерги парса тӑракан чи пысӑк трансформаторлӑ подстанцисене вӑйлӑн атакӑланӑ.

Америка авиацийӗ июлӗн 17-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Амстердама тата Германин ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайне тапӑннӑ. Тӑшманӑн 59 самолетне пӗтернӗ.

Июлӗн 18-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи истребителӗсем тӑшман аэродромӗсемпе чугунҫул объекчӗсене Францире, Голландире, Бельгире атакӑланӑ.

Ӗнер каҫхине «Бофайтер» йышши самолетсем нимӗҫсен Голланди ҫыранӗ ҫывӑхӗнче ишсе пыракан суднисене атакӑланӑ. Иккӗшне сиенленӗ.

Аэрофоторазведка материалӗсем тӑрӑх, Англи авиацийӗ июлӗн 14-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Аахена (Германия) тапӑннӑ вӑхӑтра хулари 27 завода тата ытти тӗрлӗ нумай ҫурт-йӗрсене ишӗлтерсе, сиенлесе пӗтернӗ.

Англи авиацийӗ Турина (Италия) юлашки хут тапӑннӑ чухне арсенала, «Фиат» комбинатне кӗрекен икӗ завода тата тӗрлӗ ытти предприятисене вӑйлӑн сиенленӗ.

Итали подводнӑй лодки Турци суднине путарнӑ

Турци правительстви Италине протест панӑ

АНКАРА, июлӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Июлӗн 9-мӗшӗнче Турцин «Шишман» ятлӑ моторлӑ судни, 150 тонна водоизмещениллӗскер, цемент тиесе Измиртан Антальӑна пынӑ. Ҫул ҫинче ӑна Итали подводнӑй лодки Турцин территориллӗ шывӗнчех тупӑпа персе путарнӑ. Судно командирӗпе аманнисем те, вилнисем те пур. Чӗрӗ юлнӑ ҫынсене Турцин ҫывӑхра иртсе пынӑ тепӗр судни ҫӑлса хӑварнӑ.

ЛОНДОН, июлӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаҫатра пичетленӗ хыпар тӑрӑх, Итали подводнӑй лодки Турцин моторлӑ суднине шыва путарнӑ пирки Турция Италине протест панӑ.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Шупашкарти Энергетика Техникумӗ

1-мӗш курса вӗренме илет.

Техникум ҫакӑн пек специалистсене хатӗрлет: дизелист, электрик тата строитель-техник. Техникума туллимар вӑтам шкулсене „отлично" е „хорошо" паллӑсемпе вӗренсе пӗтернӗ ҫамрӑксене—экзаменсӑрах, ыттисене испытанипе илеҫҫӗ.

Ку техникума кӗмелли условисем ҫинчен тӗплӗнрех „Красная Чувашия" хаҫатра июнӗн 25-мӗшӗнчи 150-мӗш №-те пӗлтернӗ.

Справкӑсем ыйтса пӗлмелли тата заявленисемпе документсем ямалли адрес ҫапла: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 23.

Атӑл лешъенче ӗҫленӗ чух Изолярти 45-мӗш №-лӗ кварталтан иртнӗ июнь уйӑхӗн 29-мӗш числинче икӗ лаша ҫухалнӑ. Паллисем ҫапла: пӗри—турӑ, ҫамки ҫинче тӑрӑхла йӗр пур, ҫилхисем ик еннелле те, 1938 ҫулта ҫуралнӑ; тепри—хура, ҫурӑмӗ ҫинче шупка пур, ҫилхисем пӗр пайӗ шурӑ, сылтӑмалла выртаҫҫӗ, 11 ҫулта.

Пӗлекенсене ҫак адреспа пӗлтерме ыйтатпӑр: Чӑваш АССР, Сӗнтӗр районӗ, Муркаш ялсовечӗ, „Авангард" колхоз правленине.

Главнефтесбытӑн Чӑваш Управленине Управленире тата республикӑри предприятисенче ӗҫлеме ҫак специальноҫсене пӗлекенсем кирлӗ: старшӑ бухгалтерсем, снабженецсем, пожарнӑйсем тата вахтерсем.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: Шупашкар хули, Володарский урамӗ, Пичет ҫурчӗ, 4-мӗш хут, 46-мӗш пӳлӗм.

СССР Наркомзагӗн Чӑваш АССР-ӗнчи Уполномоченнӑйне Управленире, ӗҫлеме инспекторсемпе экономистсем кирлӗ.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, Набережная Волги, 13, Отдел кадров.

Акӑшкӳл лесничествин Атӑлӑн сулахай енчи 123-мӗш кварталӗнчен вӑрман хатӗрленӗ чухне ҫак июль уйӑхӗн 7-мӗш числинче лаша ҫухалнӑ. Паллисем ҫапла: тӗсӗ хура ҫӳрен, ҫурӑмӗ тӑрӑх хурарах йӗр каять.

Пӗлекенсене ҫак адреспа пӗлтерме ыйтатпӑр: Шупашкар хули, Карл Маркс урамӗ, 90 ОРС.

Иртнӗ июнь уйӑхӗн 20-мӗш числинче икӗ лаша ҫухалнӑ. Паллисем ҫапла: пӗри—турӑ кӗсре, ячӗ „Музока", тепри—турӑ лаша, ячӗ „Смутой".

Пӗлекенсене ҫак адреспа пӗлтерме ыйтатпӑр: Чӑваш АССР, Сӗнтӗр районӗ, Кӑпас ялсовечӗ, „Ким" колхоз правленине.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, парти пурнӑҫ пайӗн—3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 750

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.